Аслан С. Нарспие асăнни : [сăвă] / С. Аслан // Хыпар. - 2002. - 12 чӳк .

Нарспие чунтан юратрăм.
Ăна ĕмĕр асăнмалăх
Пахчана та хурăн лартрăм,
Пултăр, терĕм, чĕрĕ палăк,

Эпĕ лартнă шурă хурăн
Папкаланчĕ питĕ çӳллĕ,
Кармашать вăл лупас урлă
Калама çук килĕшӳллĕ.

Паян акă килсе çитрĕ
Çĕн кĕпеллĕ симĕс çимĕк.
Хурăнран эп милĕк иртрĕм,
Çыхрăм икĕ çăмăл милĕк.

Пĕри пултăр вăл Нарспишĕн,
Тепри. - мĕскĕн чун Сетнершĕн.
Турпасси те çӳп-çаппийĕ
Пултăр путсĕр Михетершĕн.

Ир-ирех паян вăрантăм,
Арăма мунча хуттартăм,
Улăха хам чупса антăм,
Çимĕк курăкĕ пуçтартăм.

Унпала эп çăвăнатăп –
Сурăмри чăваш ачийĕ.
Çавăн пек çуса тасалнă
Кĕçтентин - Силпи каччийĕ,

Эп ăна чунтан саватăп
Паттăр, тĕрĕс çын пулнишĕн,
Ир те, каç та асăнатăп
Ахах пек «Нарспи» юрришĕн.